Çамрӑксен хаçачӗн» тӗпелӗн паянхи хӑни - пирӗн республикӑна АПШран икӗ уйӑх каялла килнӗ Кейт Линдси лингвист. 23 çулти пике чӑваш чӗлхине тӗплӗн вӗренет, ӑна тӗпчет, унӑн пуласлӑхӗ пуррипе çуккине тишкерет. Кӗске çак тапхӑрта Кейт чӑвашла калаçма хӑнӑхнӑ кӑна мар, вӑл пирӗн тӑван чӗлхемӗрпе пичетленнӗ кӗнекесемпе хаçат-журнала та çӑмӑллӑн вулать. Çапах калаçнӑ вӑхӑтра эпӗ Линдсин тӑван çӗр-шывӗнчи пурнӑç шайӗ пирки те сӑмах хускатрӑм, вӗсен йӑли-йӗркипе, вӗренӳ, сывлӑх сыхлав тытӑмӗсемпе кӑсӑклантӑм. Акӑлчанла, французла, вырӑсла, турккӑлла, испанла, арабла, таецла тата ытти чӗлхепе калаçакан пике ыйтусене тӗплӗн хуравларӗ. Францире, Мальтӑра, Таиландра, Турцире, Мароккӑра, Испанире, Кӑнтӑр Корейӑра пулса курнӑскер Раççейре - иккӗмӗш хут.

“Чӗлхе янӑравлӑ, çыпӑçуллӑ”

- Кейт, шӑпа сана Чӑваш Ене мӗнле майпа илсе çитерчӗ?

- Эпӗ Калифорни штатӗнчи Стэнфорд университетӗнче лингвиста вӗренетӗп. Чылайӑшӗ анлӑ сарӑлнӑ чӗлхесене е çӗр питӗнчен кӗç-вӗç çухалаканнисене тӗпчет. Вӑл е ку чӗлхепе вӑтам йыш калаçаканнисене тишкерекен сахал. Унсӑр пуçне эпӗ Раççее виçӗ çул каялла килнӗччӗ. Ун чухне Атӑл тӑрӑх теплоходпа ярӑнтӑмӑр, экскурси вӑхӑтӗнче Шупашкарти юхан шыв портӗнче чарӑнтӑмӑр. Хула кӑмӑлӑма кайрӗ. Çак сӑлтавсене шута илсе чӑваш чӗлхине тӗшмӗртме шухӑшларӑм. Вӑл тӗрӗк чӗлхисен ушкӑнне кӗни те пӗлтерӗшлӗ вырӑн йышӑнчӗ. Профессорсем хирӗç пулмарӗç, тӗллеве ӑнӑçлӑ пурнӑçлама ӑнӑçу сунчӗç çеç. Çавӑн чухне тӗлӗнмелле ӗç-пуç пулчӗ. Манӑн савни - Раççейрен. Преподавательсем ырланӑ хыççӑн чӑваш чӗлхине тӗпчессине ӑна пӗлтертӗм. Вӑл тӗлӗннипе чутах йӑванатчӗ. «Кейт, пӗлетӗн-и: вӑл манӑн тӑван чӗлхе», - терӗ.

- Апла тӑк чӑваш чӗлхипе эсӗ кунта киличченех паллашнӑ.

- Çук. Савни чӑвашла калаçмасть. Пӗррехинче çеç кӗтмен çӗртен: «Эпӗ сана юрататӑп», - тесе савӑнтарчӗ. Андрей Чӑваш Енрен 18 çулта чухнех тухса кайнӑ, вӑл психологи енӗпе тарӑн пӗлӳ илет. Кӗçех диссертаци хӳтӗлӗ, профессор пулса тӑрӗ.

- Пирĕн чĕлхене ăçта вĕренетĕн, ăна мĕнле майпа тĕпчетĕн?

- Вырăс чĕлхине И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУра тĕшмĕртетĕп, чăвашла калаçма Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институтĕнче хăнăхатăп тата Александр Блиновран пулăшу ыйтатăп. Унсăр пуçне Шупашкарти Андриян Николаев космонавт ячĕллĕ 10-мĕш вăтам шкулта ачасемпе пĕрле урокра ларатăп. Районсене тухса çӳретĕп. Патăрьел, Элĕк тата Канаш районĕсенче пулса куртăм ĕнтĕ.

- Ялта пурăнакансемпе калаçнă хыççăн кăмăлу улшăнмарĕ-и?

- Ятарласа тест хатĕрлерĕм. Унти 30 ыйту хушшинче тĕрлĕ йышши пур. Акă, сăмахран: «Ачăрсене чăвашла пуплеттерес килет-и?» «Мăнукăрсем тăван чĕлхене пĕлĕç-и?» «Пĕр эрнере каланă сăмахсен миçе проценчĕ - чăвашли?» Эпĕ сăнанă тăрăх - хуласенче чăваш чĕлхи сумлă шутланмасть, чылайăшĕ ашшĕ-амăшĕн чĕлхипе калаçасшăн мар, вĕсем ывăлĕ-хĕрне те ăна ăша хывма хистемеççĕ. Çакăн сăлтавĕ - аслисем чăваш чĕлхи кирлĕлĕхне туйманни. Ялсенчи лару-тăру пачах урăхла, вĕсем тăван чĕлхе пуласлăхĕшĕн пăшăрханаççĕ, çав вăхăтрах мăнукĕсем чăвашла пĕлесси пирки иккĕленмеççĕ. Хальлĕхе социаллă тĕпчеве 20 ытла çынна кăна явăçтартăм-ха, пĕтĕмлетӳ тума иртерех. Эпĕ Чăваш Енре çитес çулхи çу уйăхĕн вĕçĕччен пулăп. Çав вăхăталла хам шухăша çирĕплетсе калайăп.

- ЮНЕСКО чăваш чĕлхине пĕтсе пыраканнисен йышне кĕртнине пĕлетĕн-тĕр.

- Çапла, пĕлетĕп. Анчах манăн ăна йышăнас килмест. Пĕрремĕшĕнчен - эпĕ лингвист пулнăран. Иккĕмĕшĕнчен - таса чăваш чĕлхи юрă пек янăравлă, çыпăçуллă илтĕннĕрен. Уçă сасăсем çемçе, кăмăла çĕклеççĕ. Тĕнчере 6500 чĕлхе, кашни икĕ эрнере вĕсенчен пĕри çĕр питĕнчен яланлăхах çухалать. Тĕпчевçĕсем асăрхаттарнă тăрăх - 2100 çул тĕлне 3000 чĕлхе çеç юлать. Питĕ шел. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен чĕлхе пĕтнипе пĕрлех халăхăн ăруран ăрăва куçнă тупри - йăли-йĕрки, культури - çухалать. Кашни наци çынни тĕнчене хăйне май урăхла курать, çавăнпа вăл е ку чĕлхепе калаçакан вилсе пĕтни планетăна чухăнлатать, пушатать, тĕнчене хаклама май паракан пĕр мел çухалать. Акă Калифорнире 500 çул каялла 100 тĕрлĕ чĕлхепе калаçакансем пурăннă, анчах, шел те, паянхи кун тĕлне 50-шĕ çеç сыхланса юлнă, вĕсенчен те пулин хăшĕ-пĕринпе 20-30 çын çеç пуплет. Манăн шухăшпа, чăваш чĕлхи ан пĕттĕр тесен витĕмлĕ проектсем шухăшласа кăлармалла, унăн сумне ӳстерме тĕрлĕ меслет тупмалла. Унсăрăн каярахпа çивĕч çак ыйтăва татса пама вуçех май пулмĕ, мĕншĕн тесен халăх чĕлхе пачах пĕтмесĕр те ăна

ăнланаяс çук.

Пĕлĕш нумай,

юлташ сахал

- АПШра иртен-çӳрен ялан йăл кулать. Чăваш Ене килсен палламан çынсем сывлăх сунманни тĕлĕнтерчĕ-и?

- Шутсăр. Эпĕ хамăн çĕр-шывра кун каçипе çĕнĕ 50 çынпа калаçатăп. Анчах кунта килсен пĕрремĕш кунсенче уйрăмах йывăрччĕ. Пĕринпе сăмах хушатăп, тепринпе, анчах пурте пăрăнса утаççĕ, нимĕн те шарламаççĕ. Лавккара та, транспортра та тепĕр еннелле çаврăнса лараççĕ. Раççейре татти-сыпписĕр кулакан çынна ухмах вырăнне йышăнаççĕ вĕт е каччăсене куç хĕсет тесе шухăшлаççĕ. Çакна тĕслĕхпех çирĕплетĕп: Андрея паллашнă-паллашманах килĕштертĕм, чунран юратрăм. Çавăнпах йăл кулса çеç çӳреттĕм. Пĕррехинче вăл чăтаймарĕ: «Манпа пулас килет тĕк манпах пул, ыттисен умĕнче ан йăкăлтат», - терĕ. Пирĕн тăрăхра: «Пĕлĕш нумай, юлташ сахал», - теççĕ. Раççейре икĕ уйăх пурăннă хыççăн çакна чунпа ăнлантăм. Эпир пĕр-пĕринпе хутшăнатпăр, çапах çын чунĕнче мĕн капланнине тавçăрмастпăр. Кунта вара: «Пĕлĕш сахал, пур юлташĕсем питĕ çывăх», - теес килет. Вĕсем пулăшма тăрăшаççĕ, хăнана йыхравлаççĕ... Ахальтен мар: «Раççейре çуралса ӳснĕ тус чи шанчăкли», - теççĕ-тĕр.

- Шупашкар килĕшни пирки унччен каларăн-ха, ытти - çут çанталăкĕ, тавралăхĕ... - тыткăнламарĕ-и?

- Эпĕ Калифорни çывăхĕнче вăрман варринчи ялта ӳссе пĕве кĕнĕ. 10 минут утсан Лăпкă океан хĕррине çитсе тăратăн. Вăрман, шыв чунăма çывăх. Тен, çавăнпах Атăл хĕрринчи Шупашкара суйларăм. Элĕк районне кайсан çап-çамрăк хурăнсен илемĕпе килентĕм. Кунти çанталăк килĕшет. Шартлама сивĕрен кăна шикленетĕп, Калифорнире юр лармасть-çке. Тата мана кунти общество транспорчĕ савăнтарчĕ. Пирĕн патра, сăмахран, автобуссем питĕ сайра çӳреççĕ - 30-40 минут кĕтме тивет. Метро та чылай чухне ĕçлемест. Ӳссе çитнисен пурин те автомобиль пур, чухăннисемпе студентсем велосипедпа çӳреççĕ. Манăн та, савнин те вело пур.

- Çурма фабрикатсем çинĕ хыççăн пирĕн апата çăмăллăнах хăнăхрăн-и?

- Манăн пĕр юлташăм: «Ют патшалăхра чи хăрушши - ача çуратни, вилĕм тата ирхи апатлану», - тет. Малтан асăннисенчен иккĕшĕ йăла-йĕркепе çыхăннă. Çывăрса тăнă-тăман рис пăттипе чăх тукмакĕ хурса параççĕ, унпа мĕнле хăналанмалла-ха? Эпир ирсерен йогурт, улма-çырла, вĕри çăкăр, çăмарта çиме хăнăхнă. Халĕ эпĕ ирсерен бананпа, йогуртпа сăйланатăп. Çапах кунти ĕçме-çимене хăнăхма тăрăшатăп. Акă чăваш халăх апатне те тутанса пăхрăм. Хуран кукли, какай шӳрпи питĕ килĕшрĕç.

- Çемйӳ пирки каласа кăтарт-ха.

- Пирĕн çемьере - 7 ача. Эпĕ - йĕкĕреш хăраххи. Эпир - чи аслисем. Аннем - 43 çулта. Апла пулин те халĕ университетра вĕренет, хăйĕн бизнесне аталантарать. Атте - ресторанта тăрăшать. Вăл - шеф-повар.

- Америкăри çемьере ун чухлĕ ача пулни пирки илтменччĕ.

- Чăнах та, ку - сайра тĕл пулакан тĕслĕх. Чылайăшĕ 2-3 ача çеç ӳстерет. Пирĕн те кĕçĕннисем - усрава илнисем.

- Сирĕн патра ашшĕ-амăшĕ пĕве кĕнĕ ывăлĕсемпе хĕрĕсене укçан пулăшманни хăлхана кĕнĕччĕ.

- Пĕтĕмĕшле илсен, çапла. Анчах халĕ экономика кризисне пула чылайăшĕ çитĕннĕ ачисене те пулăшма тăрăшать. Май пур тăк укçа-тенкĕ парать, çук пулсан нимĕн те тăваймăн. Çапах Америкăра 18 çула çитнĕ çамрăкăн хăй тĕллĕн пурăнма хăнăхмалла. Çемьеленнисем ашшĕ-амăшĕнчен пулăшу ыйтмаççĕ. Намăс! Эпĕ 16 çултах ĕçлеме тытăнтăм. Университета вĕренме кĕрсен тӳрех виçĕ вырăнта тăрмашрăм. Пĕр пӳлĕмлĕ хваттере тара илме уйăхне 45 пин тенкĕ кирлĕ-çке.

- Апла тăк АПШра та пурнăç çăмăл мар.

- Йывăрлăхсем те, çăмăллăхсем те пур. Унта инфратытăм лайăхрах, çуртсем юсавлă, хитре, темиçе çул каяллах хăпартнисем те çĕнĕ пек туйăнаççĕ. Америка инкек-синкек сиксе тухсан пăтăрмаха пит йывăррăнах тӳссе ирттермест. Акă халĕ пирĕн тăрăхра «Сэнди» çил-тăвăл алхасрĕ. Савни Андрей каланă тăрăх, нумай хутлă çуртсенче те шыв, электричество çук. Апла пулин те влаçрисем килĕрен çӳреççĕ, мĕн кирлипе кăсăкланаççĕ, ыйтнине тивĕçтерме майсем шыраççĕ. Раççейпе танлаштарсан АПШра тĕпленнисем ĕç укçи ытларах илеççĕ. Унсăр пуçне шалу виçи тивĕçтермесен пуçлăхпа ним вăтанмасăрах калаçаяççĕ. Кунта апла мар иккен. Шупашкарта пĕр медсестрапа паллашсан хытах пăшăрхантăм. Унăн ĕç укçи куллен кирлине туянма та çитмест. Тĕп тухтăр патне кайма сĕнтĕм... Вăл хирĕçлерĕ, унашкал хăтланнине ырламаççĕ-мĕн. Америкăра ĕçлекен медсестран шалăвĕ чи пысăкки - ваккатсем те, экономистсем те ун чухлĕ илеймеççĕ.

- Медсестра тенĕрен, сирĕн патра медицина пулăшăвне пурте илейменнине пĕлетĕп.

- Тĕрĕсех. Халăхăн пĕр пайĕн страховка çук. Ачасен 19 çула çитиччен пур-ха, вĕсем ашшĕ-амăшĕннипе усă кураяççĕ. Халĕ эпĕ те чирлесе ӳкесрен шикленетĕп, сыватмăша кайма укçа самай кирлĕ. Раççейре вара ют çĕр-шыв çынни пулсан та тӳлевсĕрех сипленеетĕп.

- Нумаях пулмасть американсем çĕр-шыв президентне суйларĕç. Барак Обама çĕнтернĕшĕн савăнтăн-и?

- Çапла. Пур пĕрех эпĕ: «Обама ăслă, Митт Ромни ухмах», - теместĕп. Çавăнпа иккĕмĕш тапхăра суйланнă президент унпа канашласа ĕçлесси пирки каланине илтсен хĕпĕртерĕм. Ромнин те пĕлтерĕшлĕ проектсем пур. Уйрăмах экономикăна аталантарас енĕпе.

Вĕрентекене хисеплемеççĕ

- Раççейре шкултан вĕренсе тухакансем халĕ Патшалăхăн пĕрлехи экзаменне тытаççĕ. Ачасен ăсне тест мелĕпе тĕрĕслесси сирĕн тăрăхран килчĕ...

- АПШри пуçламăш вĕренӳ тытăмне ырласа пĕр сăмах та калаймастăп, мĕншĕн тесен ачасем шкула ăс пухма мар, юлташĕсемпе чĕлхе хуçма çеç çӳреççĕ. Учителе пачах хисеплемеççĕ, унăн сăмахĕсене шута илме васкамаççĕ. Манăн Америкăри университетсене çеç мухтас килет. Вĕсем - тĕнчери чи чаплă вĕренӳ учрежденийĕсем.

- Эсĕ вара пĕлӳ тĕнчине пĕчĕклех иленме пултарнă-çке.

- Анчах пурте ман пек мар вĕт. Эпĕ вулама, çĕннине пĕлме кăмăллатăп, çавăнпах çанă тавăрса ăс пухма тытăнтăм та. Хамăн ачасене /хальлĕхе вĕсем çук-ха/ АПШра вĕрентес килмест. Май пулсан Европăри пĕр-пĕр çĕр-шыври е Раççейри шкула ярăп. Кунта ачасем вĕренме ĕçе çӳренĕ пек çӳреççĕ.

- Çавăнпах: «Американсен ачисем историе пачах пĕлмеççĕ», - теççĕ иккен.

- Каларăм-çке: пĕчĕккисем вĕрентекенсене ним вырăнне те хумаççĕ. Çавăнпа учительсем те тарăн пĕлӳ парассишĕн хыпкаланмаççĕ. Раççей пирки ыйтсан та чылайăшĕ: «Унта питĕ сивĕ, упасем пурăнаççĕ, çынсем эрех ĕçеççĕ», - тет çеç. Çапах аслисем вырăс балетне кăмăлланине палăртас килет.

- Эсĕ те килĕштеретĕн-и?

- Çапла. Савнипе иксĕмĕр вырăс балетне, оперине çӳретпĕр. Кунта килсессĕнех Чăваш патшалăх операпа балет театрне çул тытрăм. «Сарпике» постановкăпа паллашрăм. Тĕлĕнмелле интереслĕ ĕç! Акă Пĕтĕм тĕнчери опера фестивалĕ пуçланĕ, унта та çитĕп. Концертсене çӳретĕп. Нумаях пулмасть чăваш эстрада юрăçисен шоу-программипе килентĕм. Вăл питĕ хаваслă иртрĕ, юррисем те илĕртӳллĕ.

- Эппин, эсӗ культурӑна кӑмӑллатӑн. Литература та килӗшет-и?

- Шутсӑр, уйрӑмах - вырӑс литератури. Ф.Достоевскин «Преступление и наказание», Л.Толстойӑн «Анна Каренина», «Война и мир» хайлавӗсене тахҫанах вуланӑ. Унсӑр пуҫне В.Набоковӑн, А.Чеховӑн кӗске калавӗсемшӗн каҫса кайма хатӗр. И.Бунинӑн «Темные аллеи» кӗнекине темиҫе хут тишкерсе тухрӑм. Хӑшӗ-пӗрне вырӑслах вуланӑ. Кӗҫех «Война и мир» романа ҫыравҫӑ ҫырнӑ чӗлхепе шӗкӗлчеме тытӑнӑп.

- Чӑваш литературипе паллашма ӗлкӗреймерӗн-и-ха?

- Сирӗн чаплӑ поэтӑрӑн К.Ивановӑн «Нарспи» поэмине вырӑсла унчченех вуланӑччӗ-ха, халӗ ӑна чӑвашла шӗкӗлчес килет. Ӗмӗтӗм кӗҫех пурнӑҫланасса шанатӑп.

“Раҫҫее тӑтӑшах килесчӗ”

- Пирӗн йӑла-йӗрке пирки мӗн пӗлетӗн?

- Чӑваш туйне сӑнланӑ фильм куртӑм. Качча каякан хӗр питӗнче кулӑ ҫиҫменни тӗлӗнтерчӗ те, сехӗрлентерчӗ те. Питӗ шеллерӗм ӑна. Унсӑр пуҫне Шупашкарти Чӗлхе фестивалӗнче пӗр секцире хӗрсен ҫемье ҫавӑрмашкӑн пӗчӗклех хатӗрленме тытӑнмаллине каларӗҫ. Туя пынӑ кашни хӑнана тӗрленӗ тутӑр парнелемелле имӗш, арча тултармалла...

- Сирӗн патра туя мӗнлерех паллӑ тӑваҫҫӗ?

- Туй-ҫуй вӑраха тӑсӑлать. Пӗр кунхине хӗрӗн килӗнче - хӗрарӑмсем, каччӑ патӗнче арҫынсем пухӑнаҫҫӗ, ӗҫеҫҫӗ, ҫиеҫҫӗ. Кӑштахран авланаканнин ҫуртӗнче - яшсем, качча каяканнин килӗнче пикесем пуҫтарӑнаҫҫӗ, каллех - уяв. Туй вара чиркӳре, ресторанта е

урамра, уçă тӳпе айĕнче, иртет. Хĕр тусĕсем - пĕр тĕслĕ, каччăн юлташĕсем тепĕр тĕслĕ çи-пуç тăхăнаççĕ. Çĕнĕ çынсен чи çывăх икĕ тусĕн сăмахĕсем чи хакли шутланаççĕ.

- Туй кĕрлеттерме укçа-тенкĕ самай кирлĕ-тĕр.

- Питĕ-питĕ нумай. Мĕн чухлĕ расхутланма тивнине калама та намăс.

- Çамрăксенчен ытларахăшĕ миçе çулта çемье çавăрать?

- Тĕрлĕрен. Акă, сăмахран, манăн аттепе анне пĕрлешнĕ чухне 20 тата 21 çулсенче пулнă, асаннепе асатте те çав ӳсĕмре мăшăрланнă. Куратăр-и: эпĕ кая юлса пыратăп.

- Ăнланнă тăрăх - эсĕ чăваш арçыннине качча тухăн.

- Тем пекехчĕ. Тĕрĕссипе, халĕ Шупашкарта Андрейăн амăшĕпе тата аппăшĕпе пурăнатăп. Савни Чăваш Енре çичĕ çул пулман. Эпĕ килсен анне /Кейт пулас хунямăшне çапла чĕнет. - Авт./ савăнчĕ - ара, эпĕ унăн ывăлĕн савниййĕ-çке. Çитменнине, кашни кунах шăнкăравлать.

- Йăва çавăрсан Раççейре тĕпленме шухăшламастăр-и?

- Андрей валли кунта ĕç пулмĕ. Чуна килĕшнĕ ĕççĕр вара пурăнма кансĕр, çавăнпа АПШрах юлăпăр. Тĕрĕссипе, Германире е Австрире тĕпленме те шухăшсем пур. Çапах Раççее тăтăшах килесчĕ.

- Çулталăкри хăш уява ытларах хапăл тăватăн?

- Çуралнӑ куна, Çӗнӗ çула, Раштава. Пирӗн çемьере çирӗп йӑла пур. Çӗнӗ çул умӗн пурте пӗрер, анчах сумлӑ парне туянатпӑр, çавӑнпа пӗрер парнене çеç тивӗçетпӗр. Ку ӑпӑр-тапӑр 8 япала иличчен чылай лайӑхрах. Раштавра анне пире, ачисене, пурне те пӗр йышши пижама тӑхӑнтартать...

- Ӗмӗтӳсем пысӑк ӗнтӗ. Пирӗн вулакансене пӗрне те пулин пӗлтерсемччӗ.

- Паянхи тӗп тӗллев - чӑваш чӗлхине питӗ лайӑх вӗренесси, çитес çулхи çу уйӑхӗ тӗлне пӗтӗмлетӳ тӑвасси. Тӑван тӑрӑха таврӑнсан вара аспирантурӑра тепӗр курс ӑс пухмалла. Юлашкинчен манӑн çакна калас килет: чӑвашсем, хӑвӑрӑн чӗлхӗре куç пек упрӑр - вӑл тӗлӗнмелле илемлӗ.

**Дмитрий Моисеев. Газета «Çамрӑксен хаçачӗ». 2012. 16 ноября**.